# ВАККАТ.

Раштав пирки Мат̆т̆а ӗҫкӗ тунӑ. Тунӑ та, ӗҫҫе ӗсӗрӗлсен, хӑйӗн йыснӑшне пуҫне ҫапса шӑтарнӑ.

— Ех, пуҫ ыратат̆ҫке, тет Мат̆т̆а йыснӑшӗ. Ку вилешшӗ, Мат̆т̆ана... Каларӑмҫке унҙҙенех, вӑл Мат̆т̆ан ӗҫҫен йӗрки ҫук, тесе. Парӑпин парӑп пӗр ҙетвӗрт Рокошкӑна, ку ӗҫе ахал̧ хӑвармастӑп. Ҫав Мат̆т̆а ҙӑсланкине пӗрре, пӗрре кӑтартӑпах.

Мат̆т̆а йыснӑшӗ ҫапла ҙун шӑртланнипе икӗ пулӑштух ҙикет те, ҫӑрха кӗсрине кӳлсе Ҫӗрпӳве ваккат патне тухса кайат̆.

— Ҫапла, ҫапла,—тет Мат̆т̆а йыснӑшӗ вакката. Ман ӑна хупса лартарасҙӗ, тет. Вӑл, пуршуй, тет.

— Хупатпӑр, ма хупас мар, тет шур сухаллӑ ваккат. Пӗрре анҙах прошшени ҫыратпӑр, тет.

Е, ҫырха, ҫыр прошшенние. Кӗсӗр ӗнтӗ вӑл таврашӗ лайӑх пӗлеттӗр, тет хӗрсе кайнӑ Мат̆т̆а йыснӑшӗ. Епӗ сана уншӑн тем ҙул ырӑ тӑватгӑмҙҙӗ, тет.

— Какшӑ, тет лешӗ. Мана Хусанти ваккатсем те пӗлеҫҫӗ, тет. Епӗ ҫырсан вара пулҙӗ ӗҫ, тет. Тол̧кка ман паллӑ: ҙетвӗртшӗн—пӗр уйӑх лармалла ҫыратӑп, сысна ҫӳришӗн—вуҫ уйӑхлӑх.

— Ах, пошалстӑ, ҙасрах хупасҙӗ ӑна, тет Мат̆т̆а йыснӑшӗ хӗпӗртесе.

— Йур, тет пулӑштуха типӗтсе йарсан ваккат Мат̆т̆а йыснӑшне. Есӗ тухха, тет. Ман сарайра вутӑ ҫурманҙӗ, есӗ тухса ҫурха, тет, епӗ унҙҙен сан валли прошшени ҫырса хатӗрлем, тет.

Мат̆т̆ йыснӑшӗ сарайне тухат̆ те тапратат̆ вутӑ муклашкисене салатма. Пӗре ҫавӑрса ҫапат̆ те—вутӑ виҫӗ татӑк пулса сапанса кайат̆. Ҫурса купаласан, йӗп-йӗпе тарласа кӗрет пӳрте.

— Ҫурса пӗтертӗни? тесе ыйтат̆ кунтан ваккат.

— Шалтах пӗтертӗм, тет ку. Ҫурӑма та хырӑма та тар тухрӗҫке, тет.

— Апла пулсан, на «закуси», тет ваккат. Тол̧ккӑ тӗрмене хупма нумай ҫырас пулат̆. Ӗнтӗ тепӗртакках килкарти тухса тасат, тет ваккат Мат̆т̆а йыснӑшне.

Мат̆т̆а йыснӑшӗ тула тухат̆ те, шухӑшпа кайат̆.—Ех, Мат̆т̆а, Мат̆т̆а, тет. Сана пула епӗ ҫак йут мӑшкӑл̧не куратӑпӗҫ, тет. Пӗрех хуҙҙен ларатӑп та, суратӑп акӑ, тет.

Пуҫне ҙикет те, ӗҫлес килмесӗр, хӑйне хай ӳкӗнсе ирӗксӗр тасатат̆ ваккат килкартине.

— Ҙхву! Йӗрӗнҙӗк! Кирлӗ мар! Ҫӑварни ҫитсен пӗр ҙетвӗрт лартарӑп та, каҫарӑп шелмӑ Мат̆т̆ине. Пӑрахас...

Ҫапла каласа кӑмӑла уҫҫа йарат̆ те, кӗрет пӳрте.

Лешӗ ҫырса пӗтернӗ:

— Вот, готово! тет. Ӗнтӗ кайах, сансӑр пуҫҫӑр та, ӑна тӗрмене хупатпӑр, тет.

— А ман ӑна каҫарсан май килмести? тет ӗҫлесе ывӑнса кӗнӗ ҙӑваш.

— Ой, хал̧ ҫук ӗнтӗ, ӗҫ сута карӗ, никак май килмест, тет ваккат.

Мат̆т̆а йыснӑшӗ пуҫа лӑнк суллат̆ те киле тухса тавӑрӑнат̆. Киле ҫитсен Мат̆т̆а йыснӑшне арӑмӗ калат̆—«Хал̧ анҙах Мат̆т̆а тухса карӗ, тет. Ҫураҫашшӑн икӗ ҙетвӗрт илсе килнӗҙҙӗ, тет. Сута пама карӗ тесен, ҫиллене тухса карӗ, тет.

Ҫапла каласан Мат̆т̆а йыснӑшӗн ӑшҙикки тулса ҫитет. Мат̆т̆а йыснӑшӗ арӑмне ҫивӗтӗнҙен йарса илет те пӗре пуйт̆ум лайӑх мунҙа кӳртет.

Мат̆т̆и те хӑй йыснӑшӗ килнӗҙен тепӗр ҫулпа тӳрех ваккат патне вӗҫтерет. Ҫитет те хӑйӗн ҫураҫма тӗрленӗ икӗ ҙетвӗртне кӑларат̆ те, тӳрех ваккат умне лартат̆.

— Мин ку? тет шурӑ сухаллӑ ваккат.

— Каҫар тархашшӑн, тет хӑраса ӳкнӗ Мат̆т̆ийӗ.

Лешӗ Мат̆т̆а ҫине пӑхат̆ те:

— Ты крамӑтнӑй штол̧? — тесе ыйтат̆.

— Ҫук, тет Мат̆т̆и, аҙа-пӑҙана хӗрхенех, ман сурӑхӗ те пӗре анҙах, ҙӑнахах ҫапрӑм, винават, ҫапас та ҫукҙӗ, ҫапрӑм ҫав, тет.

Ваккат шкапӗн ҫинҙен пӗр кив ҙаҫсаслав илет те, ӑна варрин̧ и уҫат̆ те, кӗнекине кутӑн тытса Мат̆т̆а сӑмси умне пырса тӗкет.

— Куратӑн? Акӑ устав, тет ваккат пӳрнипеле пӗр пуквӑ ҫине тӗксе. Ку стат̆йапа вунӑ уйӑх лармалла, а ку стат̆йапа ҫултален та ларӑп, тет ваккат хӑрушшӑ сасӑпа.

— Ах, тур-тур, тет Мат̆т̆а айне йарса. Унтан ваккат умне ҙӗркуҫҫи ҫине тӑрат̆ те: — Тархашшӑн ҫӑл, тесе тархаслат̆. Епӗ сана пӗр пӑт тул ҫӑнӑх илсе килсе парӑп, тет.

— Апла пулсан тӑр, тет ваккат кулса йарса. Епӗр ӑна стат̆йине амнисти айне тӑвӑпӑр. Мана вӗт Хусанти ваккатсем те пӗлеҫҫӗ, тет ваккат.

— Айнех ту ӑна стат̆йине, айнех ту, тет Мат̆т̆а ура ҫине тӑрса.

— Тӑвапӑр, тет ваккат. Есӗ тол̧кка пӗр пӑт тул ҫӑнӑхне ан ман. Стат̆йа мана мӗн вӑл? Епӗ ӑна пӗре пӑхап та — стат̆йа ҫук та вӑл. Пятнадцать юридических слов напишу, и ты будешь спасен! тесе каларса йарат̆ ваккат хӑранӑ ҙӑваша.

Мат̆т̆а киле тавӑрӑннӑ ҙух йыснӑшӗ тӗлне ҫитсен лашине виҫҫӗ ҫапат̆ те, ҫил тӑман пек вӗҫтерсе ирӗсе кайат̆.

Хветке.